Хакĕ 16 пус

МĔТРИ ВАÇЛЕЙЕ

31-72

# ЫРАШ

ОЂЂĔРК

ЂĂВАШСЕН
ПАТШАЛĂХ
ИСТАТТĔЛСТВИ
Шупашкар
1931

МĔТРИ ВАÇЛЕЙĔ

# Ы Р А Ш

ОҪҪĔРК

ҪĂВАШСЕН ПАТШАЛĂХ ИСТАТТĔЛСТВИ

Шупашкар — 1931

Отпечатано в типографии № 1 ЧувашГИЗа
Тираж 5000 экз. Уп. Чувашглавлита № 1289
Заказ № 118

„Такое здоровое движение, каким, несомненно, является колхозное движение, все равно добьется своего, несмотря ни на что, несмотря на отдельные препятствия и трудности"
(СТАЛИН)

# Ы Р А Ш

(оҫҫӗрк)

„Ыраш" колхос ман ҫўремелли маршрут ҫине кӗмесҫӗ вӑл.

— Ҫетрик колхосӗ.

— Ҫетрик колхосӗ.

— Ҫетрик колхосӗ вӑйлансах пыраӗ, тенисене илтессе ҫылай хут илтнӗҫҫӗ. Анҫах вӑл „Ыраш" йатлӑ иккенне пӗлмен. Ун ҫинҫен калаҫнӑ ҫух вӑл „Ыраш" иккенне те каланӑ пулӗ. ӑна еп аса илсе йулайман пулас. Шетмӗ йенне ҫитсен тин:

— „Ыраш" колхосӑн виҫӗ арман, выҫӑхсем те йышланса карӗҫ, йӑлӗпех ӑратлӑ сыснасене ӗрҫетсе йаҫӗҫ, тенине илтрӗм. Вара йатне ытарайммасӑрах Ҫӗрпўрен Йетӗрнене кайакан телефон йупиллӗ симӗс ҫеремлӗ ҫул тӑрӑх тухса утрӑм. Икӗ айкинҫе хурӑнсем тӗл пулкаласа ӑшӑ ҫилпе калаҫкаласа йулаҫҫӗ.

Хурӑнсем ҫӑштӑртатса ларни хампах калаҫма хатӗрленнӗ пекех туйӑнаӗ. Хӗрсем пек ҫӗнӗ ҫӑпатапа хура тӑлапа сырнӑ ураллӑ, шур шупӑрлӑ, кӑтра ҫўҫлӗ вӗсем. Пӗве ҫитнӗ ҫӑваш хӗрсем пек.

— Йатарласа тухнă ђух колхоссене комунсене нумайтарах çитсе уйри тырпула пуçтарса кĕрессипе кĕракине йепле хатĕрленнине пĕлесђĕ, пулăшмалли тĕлте,—пулăшасђĕ, тесе шухăшласа утатăн. Çак шухăша ђăрмантаракан кирлĕ мар мана. Хаљхи вăхăтра умра татах та калама çук пысăк сатађ вĕт. Партти хушнă сатађ. Ăна пирĕн ĕçе кĕртмеллех. Пĕтĕм шухăш çакăнта пайан. Ман кăна мар, пĕтĕм комсомолĕс, пĕтĕм комунисăн, пĕтĕм ĕçхалăхĕн шухăшĕ уйри тырпула пуçтарса кĕрессипе кĕраки акса хăварасси çинђе.

— Йепле пулин те ђипер пуçтарса кĕресђĕ...

— Ђипер акса хăварасђĕ, теççĕ. Колхосăн малашнехи ўсĕмĕ çакăнтан килет. Колхоса çĕнĕрен кĕрес йухăма примерлă ĕç, примерлă колхос кирлĕ. Акă мĕншĕн пайанхи кунсенђе колхоссем тăрăх ушкăн-ушкăнпа прикатирсем, акрономсем, вĕренекенсем, пионерсем çўреççĕ.

Тăкаксăр мар, вăл та пур, кахалли те, йăвăрри те, çивĕђђи те пур. Утса пыратăп çак хушăпа хайхи кĕççе пек çемçе çерем тăрăх.

Сылтăм йенђе хайхи пĕве çитнĕ ыраш. Сулахай йенђе симĕсрех сĕлĕ. Выљасса ырашран йăрăрах выљаť вара сĕллийĕ. Ыраш: те мăн кĕлеткипех выљаť, тесрен—питех авкаланмасť. Те пĕрђисем ўкесрен шикленет. Пĕр пĕрђи те хаклă вĕт. Ампарах илсе çитерессшĕн пуљ пуђахĕ хăй пĕрђисене. Шереписемпе

шелтӗртетсе ларакан сӗлӗ хӑй ҫине уйрӑмӑнах ҫавӑрӑнтарса пӑхтарҫӗ. Ҫуркуннехисене аса илтерҫӗ. Хаҫ вӑл акӑ шӑтса ӳснӗ те; савӑнса кӑна ларать. Акнӑ, шӑтнӑ, ӳснӗ, вырмалла та пулать—нимех те мар пек. Ҫук, ун пек кӑна мар. Ку ҫуртри ытти ҫулхисенҫен пӗтӗмпех урӑхла акӑннӑ, пӗтӗмпех урӑхла ӳснӗ. Ытти ҫулсенҫи пек вӑхӑт ҫитнӗ те, сухапуҫсемпе сухаланӑ та акнӑ мар. Кӑҫал ӑна акнӑ ҫухне йун тӑкмасӑр та пулман. Мӗн ҫухлӗ кӗвӗҫӳ, мӗн ҫухлӗ хирӗҫӳ, тавлашу... вӗлерӳ, пушар пулман пуҫ, вӑрттӑн пухӑвӗсем, тем те, тем те. Хӗллехи сивӗсемҫех тапранҫӗҫ вӗсем. Колхос вӗремеллипех вӗрет... Апрелӗн 15-мӗшӗнҫе маневӗр туса иртермелле. Хатӗрлетпӗр... Вӑрлӑхсене тасатнӑ, ака хатӗрӗсем ҫителӗклӗ, ака вӑхӑтӗнҫе камӑн мӗн тумалли паллӑ.

— Ыран пайанах акана тухма пултаратпӑр.

Апрелӗн 15-мӗшӗ. Кӗҫӗр ыйӑх та килмерӗ. Кӑшт тӗлӗрсе кайатпӑр та тӗлӗкре те: маневӑр, прикатӑ ҫаврӑнаҫҫӗ.

— Сан та тӗлӗкре маневӑри?

— Манӑн та ҫав, кӑшт тӗлӗрсе кайсанах: уйа маневӑра тухнӑ пек, лашасем акана васкаса кӗҫенеҫҫӗ пек,—тет колхос ҫленӗ Прокопйӗв.

— Епӗр клевӑр акма тухнӑ пек, шӑннӑ калҫа ҫийӗн акатпӑр пек,—тет Луккин.

Акӑ 10 сехетре колхоҫнӗксем хӑйсен плукисене ҫанкӑртаттарса ҫуракине хатӗрри хатӗр маррине харпӑрхӑйне тӗрӗслеме маневӑра

тухаççĕ. Хăшĕ-пĕрисем хăйсен пысăк та, илемлĕ çутă кантăксем витĕр колхоçнĕксем çине пăхса шăлĕсене хăйраççĕ, хăшĕ лахăлтатса кулаççĕ. Нумайĕшĕ çак маневăр пулассине те ĕненмен.

— „Лăпăртататаççĕ çав ухмахсем" теççĕ. Вĕсем хихĕлтетсех кулаççĕ. Хăшĕ колхосран тухаççĕ, хăшĕ кĕреççĕ, хăшĕ йĕреççĕ...

Прикатăсем йалта выçăллă-тутăллă пурăнаççĕ. Хăшĕ вĕсене йурийех ни çăкăр, ни улма, укçа тем ђул парсан та ним те памаççĕ. Прикатирсем йала килсе кĕрсенех хăшĕн ђĕрийĕ кăртах сикет. Вăрттăн ђул та хатĕрлет, пăшалĕ ĕçлет—краштăн вăрçи пек. Хăшĕ вĕсем килессе кĕтеççĕ. Комсомолĕссем—çамрăксем пуху вăхăтĕнђех вăрлăх тасатаççĕ. Хăнтăртатать сорттировккă. Ун патне ђеретĕнех вăрлăх лавсем пыра-пыра тăратаççĕ. Пĕрисем çĕклемпех мекĕрленсе йăтса пырса тасатса кайаççĕ, теприсем—сорттировккине хăй килнех илсе кайса суртлаççĕ. Пĕр йалта тасатса пĕтерсен, тепĕр йала кайать сорттировккă. Теме кĕтнĕ пек кĕтеççĕ ăна. Вăрлăх хатĕрлеççĕ. Хăшĕсем çĕр виçеççĕ, хăшĕсем ĕç планне тăваççĕ. Акрономĕ, çĕр виçекенĕ, вĕренекенĕ, уђђиттĕлĕ, партгийтси, комсомолĕсĕ, пионерĕ—пур те вутри пек утшăнаççĕ. Пуху хыççăн—пуху, саççетани хыççăн—саççетани канашлу хыççăн—канашлу. çиме те вăхăт çук, канмалли вăхăт мар. Çăтса та çитермелле мар халăх пÿртĕнђи çăраланса ларнă тĕтĕме, тапак

туртман çыннăн ђĕри татăлса анас пекех туйăнаť, анђах вăл ун çинђен никама та шарламасť—уђђитлĕ вăл, йе прикатир. Ăна каласа тăма вăхăт çук ун. Ĕç нумай. Калама çук пысăк ĕç—çуракине ăнăçуллă иртерессн, ђи малтан колхос çĕрне ђипер касса илсе, акмалли çĕр выранне татах пысăклатса акса хăварасси. Çавăн çинђен каласаççĕ пайан, çвăан çинђен сыраççĕ. Урамра выљаса çӳрекен пĕђĕк ађи çавăн çинђен каласаť хăйĕн йулташĕпе. Вĕсем те ун çинђен нумай илтрĕç

Вулакан, йе маневăре айакран куракан çын тен: çӳлтен хушнипе çакăн пек тухнă тейĕ. Çук, ун пек мар. Епĕ сире малтанах каларăм; колхос çуракине пĕтĕм 100 прођђĕнĕпех хатĕрленсе çитнĕ, терĕм.

Тăп тăрă кăвак тӳпе. Те ир пирки—çанталăк сивĕрех. Ура айĕнђе пăр та, шăнса хутланса ларнă йур айĕнђен тухнă кĕркуннехи курăксем курăнкаласçĕ. Çĕпĕ курăксем те шăтма пуçлĕç ĕнтĕ. Хушăран кайăксем вĕçкелесе иртеççĕ. Ав, катаран хуракăшсем кикăлтатса кĕтесленсе килеççĕ. Çанталăк питĕ шухăша йараť.

Колхосниксем хăшĕ урапа, хăшĕ плук, хăшĕ сӳре кӳлсе тухнă та, ретĕнленсе тăнă. Вăрçă вăхăтĕнђе наступленине кайма хатĕрленнĕ пекех туйăнаť. Кăшт каласкаллса тăркаларĕç те, Моросăв çынсем варнерех тăрса хайĕн хĕрӳллĕ сăмахне тăкма пуçларĕ.

— Йулташсем! Акă ĕнтĕ пољшевикла çур-

акине пĕтĕмпех хатĕрленсе çитнĕ теме пултаратпăр. Хĕнсĕрех мар, йăвăрлăхсем те нумай. Анђах вĕсем пире хăрушла мар, полђшевиксен партти йертсе пынипе епĕр вĕсене çĕнмеллех çĕнтĕмĕр, çĕнетпĕр те. Кунта тухађђенех хăшĕ пĕри çак ĕç çине шанмарĕç, хăшĕ пăрахса та карĕç, елеклесе те çӳреççĕ, ђĕртсе йаракансем те, вĕлерекенсем те пулђĕç—çирĕпписем çапах колхосра йултăмăр, тăшмана ку йенђен çĕнтĕмĕр, ĕнтĕ ђăн та çуракине полђшевикла иртерĕпĕр.

— Урра-а-а!..

— Урра а-а!..

— Урра-а-а!!!

— Сывă пултăр комуниссен партти...

Моросăв калани çӳлтен тем пăрахнă пекех пулђĕ, уйри халăх ал çупнипе, урра кăшкăрнипе çĕр ђĕтренĕ пекех туйăнђĕ. Кашнин ђĕри хавасланса карĕ. Кашни тем каласшăн пек. Кашнийех хăйсем çуракине хатĕрленсе çитнипе савăнаççĕ. Çав тери йăвăрлăхран тухнă вĕсем... Вĕсем пайан хире орканисатсиленсе çитнĕ.

— Ман ку çук, ун вăл çук, — тенине илтместĕн.

— Епĕ хатĕрленсе çитеймерĕм — тени те пулмарĕ.

— Пур те хатĕр. Ыранах çуракине тухма пултаратпăр, тесе пурĕ харăс каларĕç.

... Çук, çӳлтен каланипе, çӳлтен хушнипе мар. Пур ака хатĕрне пĕр çĕре пĕр сăмахпа

кӳртсе лартрӗҫ. Ҫакӑн пекех ӗҫлесе, хатӗрлемешкӗн тепӗр колхоса ӑмӑртӑва ђӗнђӗҫ.

Колхос йалти халӑха хӑйӗн лайӑх орканисатсиленсе ҫитнипе тӗлӗнтерђӗ. Ахаљтен мар колхосран тухнӑ ҫынсем сайавленисем парса кӗресшӗн тепӗр хут.

... Акӑ, тӗлӗкре мар, хут ҫинђе кӑна мар, ир 5 сехетрех клевӗр акма тухрӑмӑр. Колхос ђленӗсем ретӗн-ретӗн тӑђӗҫ те, симӗс ыраш калђисем урлӑ сапса пыраҫҫӗ. Епӗр, вӗгӗршакӑр ађасем, инкесем, кинемейсем, Луккинсем ыраш улӑмӗпе паллӑсене туса пыратпӑр. Колхос касса илнӗ тӗлсене хӗрлӗ йалавсем ҫакнӑ та, катаран вӑрманпа ҫынсем ҫинелле савӑнӑҫлӑн пӑхса выљаса: Пӑтӑр, пӑтӑр, пӑтӑр, Хатӗр, хатӗр, хатӗр-р р, тесе тӑраҫҫӗ.

... Акатпӑр.

— Ех савӑнӑҫ. Хӗл каҫађђен: Колхос, колхос, пӗрлешӳллӗ ӗҫ, тесе калаҫнине хут ҫине, ҫырнине тин ӗҫре куртӑмӑр. Халӗ ӗнтӗ ђӑнҫирӗп колхос пулђӗ тесе мухтанма пултаратпӑр,— терӗ ӗлӗк патрак пулнӑ Йашкӑв колхоҫнӗк.

— Тӗрӗс—теҫҫӗ ыттисем.

Прикатирсен те хӗпӗртенипе ђӗрӗ-ђунӗсем тем ҫӳллӗшех ҫӳлелле ҫӗкленђӗҫ.

Ҫаксене аса илтерђӗ шерепеллӗ шелтӗрпи тутӑ сӗлӗ. Ҫакӑ вӑл пӗрремӗш пољшевикла ҫураки. Ку таранђђен кунашкал акӑвсем пулман-ха. Малашне кашни акӑвах пољшевикла пулмалла.

„Халӗ умри сатађ—ҫак пољшевикла акнӑ ҫур-

трийе поъшевикла типтерлӗ, ăнăçулла пуçтарса кӗресси“ тесе малалла утрăм. Шухăш хыççăн шухăш.

* * *

Ыраш пусси. Шап-шур халăх ку ыраш пуссинъе. Пур те тыр выраççӗ. Пур те каскаççӗ. Хӗвелех васкатаӗ пулас. Пӗçерет вăл. Пӗр тӗлте уйрăмах халăх нумай.

Ъӗвӗл, ъӗвӗл, ъӗвӗл, калаçаççӗ.

Колхос тыррине выраççӗ пулмалла, тесе пыратăп. Анъах йеплеха машшинсăр выраççӗ. Никамран та ыйтма çук. Ырашӗ те, сӗллӗ те хурăнӗ те ъӗнмеççӗ. Тепӗр çухрăм пек кайсан шнейккă хăйех ъӗнсе илъӗ мана.

— Кунта епӗ, кунта вăл „Ыраш“ колхос ыраш выраӗ, тенӗ пекех туйăнъӗ. Шнейккă сассине илтсенех хӗпӗртесе карăм. Васкарах утма пуçларăм. Шăмшак çăмăлансах карӗ.

Малган курнă тӗлти халăх колхос халăхӗ пулман иккен, колхос халăхӗ кунта айлăмрах çӗрте пӗъӗк, илемлӗ „Усрав“ текен вăрман çумӗнъе выраӗ. Икӗ лаша кӳлнӗ те, пӗр пысăк ана тавра шнейккăна пӗр çынах хăлаçлантарса пыраӗ. Пӗр çирӗм çын пулӗ вырса пăрахнă тырра кӗлтелесе пыраççӗ, Ватти, вӗтти кунта вӗсем. Пур те тухнă. Пур те хӗпӗртесе ӗçлеççӗ.

— Малган пире лайăх вырмасӗ тесе хăратрӗç, пăхха, алпа вырнинъен те типтерлӗ выраӗ пирӗн шнейккă, тет пӗр кăвак сухаллă колхоçнӗк Петӗр. Кулкалаӗ хăй сухалне шăлкаласа, кӗлтене çыхса тӗм çине кайса хунă май.

Ёҫлессе ку пысӑк ана ҫинҫе 30—40 ҫынна йахӑн кӑна ёҫлеҫҫӗ. Ыттисем тепӗр 50—60 ҫын ана ҫине пӑхса тӑраҫҫӗ. Хӑшӗ шнейккӑ ҫумнерех пырса пӑхаҫҫӗ, хӑшӗ шнейккӑ вырса хӑварнӑ ҫӗрте пӑхса тӑраҫҫӗ. Камсем вӗсем? Ма ёҫлемеҫӗ-ха вӗсем кунта? Мӗншӗн тесен вӗсем кунти ертеле пӗрлешеймен-ха, мӗншӗн тесен, вӗсем ертеле пурнӑҫ савӑнҫӑкне туса йарассине пӗтӗм вӑйхала хӑпартассине, пӗтӗм пурнӑҫа ёҫ йурри тӑвассине, машшин кӗвви ҫинҫе пурӑнмалла пайанҫҫен сисмен-ха. Пайан тин машшин шавӗпе, машшин ҫӗри сикнине курнипе савӑнаҫҫӗ. Ҫавӑнпа та пайанлӑха колхосра мар вӗсем „ыранхи“ колхоҫнӗксем. 3—4 ҫухрӑмран шнейккӑ йепле вырнине курма килнӗ. Шнейккӑпа паллашаҫҫӗ, пайанхи колхоҫнӗксемпе ыранхи колхоҫнӗксем пӗр-пӗринпе калаҫаҫҫӗ. Машшин та вӗсем хушшинҫе калаҫаӗ. Ҫӗнӗлле ёҫлени тем ҫул лайӑххине ёҫре кӑтартаӗ, акитатсилет. „Ыранхи“ колхоҫнӗксем вӑл каланине, вӑл ёҫленине йураҭаҫҫӗ, унпа интересленеҫҫӗ.

Ыранхи колхоҫнӗксем кун каҫаҫҫен те татӑлмаҫҫӗ кунтан.

Пӗрисем курса кайаҫҫӗ те, теприсем каллех килеҫҫӗ. Машшин ёҫленӗ тӗлти ҫынсем кӑна мар, пӗтӗм ыраш пуссинҫи халӑх машшин шавланипе савӑнаӗ. Кашни кӗлтене ҫыхнӑ май, йе кӗлтене тӗм ҫине кайса хунӑ май „Ыраш“ халӑхӗ, ҫине пӑхса илеҫҫӗ. Вӗремеллипех вӗрет „Ыраш“. Айакра пӗҫӗк аҫасем

выђаса çӳреççĕ. Улăхра лашасем. 23 лаша вĕсем.

Хăлаçланаť шнейккă. Васкаççĕ. Çамрăксем пушшех хавасăн ĕçлеççĕ. Йăранăн пĕр йенне 4 йĕкĕт, тепĕр йенне 4 хĕр тăнă та, пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ. Кашни кĕлтене çыхса хумассерен пĕр йенђисем тепĕр йенђисем çине вăрттăнтарах пăхса илеççĕ те, кулкалаççĕ. „Ăмăртăва тухнă пулмалла кăсем, уйрăмах хăвартланаççĕ“, тесе шухăшласа тăнă вăхăтрах:

— Кăсем пирĕн ăмăртăва тухнă-ха, хăш йенђи çĕнтерет—мала тухаť, çĕнтерекенне пăрнелемелле—каласа хуђĕ ĕçе шута илсе пыраканни.

Çамрăксем кăна мар, колхос хăй пĕтĕмĕшпе те тырпула ђипер, типтерлĕ, ăнăçлă пуçтарса кĕрес пирки тепĕр колхоспа ăмăртăва тухнă. Çакă иккен ĕç йуратăвне, ĕç мухтавлăхне, ĕç ăнăçăвне, ĕç илемлĕхне кӳрекенни.

Нумайах пулмасť вĕт кун пек марђђĕ. Çак хиртех сăмахран, çак çынсемех пĕр çĕрте виççĕн, тепĕр çĕрте 5—6-ăн тухса тăрађĕç те тыр хĕрне, кун каçађђен çурлапа вырса ырса та çитеђђĕç. Пĕрмайах кукăрăлса пĕрђĕшерĕн каснă пек касса выр. Кун каçађђен нимĕн те çĕнни çук. Ир пулаť те, каç пулаť. Ирхи апата тухасса кĕтет те, ăна çисессĕн—кăнтăрлана кĕтет. Кăнтăрла иртсен хĕвел анасса кĕт. Кашни кунах пĕр йевĕрлĕ—пĕр пекђĕ кунсем. Пайанхи кун та ĕнерхи пек, ĕнерхи виçĕм кунхи пекђĕ. Ыран çăмăр пулсан кăштах ка-

напăри тени кăна. Ахалĕн канма май çук. Кансассăн тырри тăкăнса кайма пултарать. Сĕлли те кĕçенме пуçланă – шереписем шĕлтĕртетсе ларaççĕ, урпи те пуçа утма пуçлĕ, пăри те пĕрмайах алпа ђакалтан. Çавăнпа тыр вырма тухас патне çитес умĕн, хаљ ĕç йĕрĕнтермест тетпĕр пулсан ун ђух тыр вырасси тем пекех хăрушла пекђĕ.

Уйар çанталăк кун, пуç тăрринђе шăна-кайăксем нăрлатма пуçласассăн-тыр вырма тухасси инçех йулманинне ђĕре çисет вара, Ыраш пусси çинелле пăхсан: шупка лаша çилхи пек пулнине куратăн.

Йе варпуççи тăпки пек туйăнать ыраш пусси. Тулли илемлĕ пĕвĕпе савăнтарать ыраш пусси, анђах ăна вырма тухма хĕпĕртеттерекенни нимех те пулман.

Пайан ку пусă йăлтах урăхла. Пайан пусă кăна мар, ырашăн пĕрђи те хĕпĕртеттерет. Пайан кунта машшин кĕрлет. Пĕрлешӳ кĕрлет. Ĕç йурламаллипех йурлать. Пайан ку тĕлте тăлăхăн выракансем çук. Пулман та, айакрарахра выраççĕ вĕсем. Пĕр вăхăта тимлесе ĕçлеççĕ те, каллех пурĕ харăс канма лараççĕ. Лаши те канать, етемми те канать пĕр вăхăтра.

Çамрăкĕсем ку вăхăтра шыва кĕме кайаççĕ.

Кунта ĕç хĕн мар пайан. Кунта ĕç савăнтарать, шăмшака хăпартать. Кунти ĕç йурламаллипех йурлать. Акă ăçта пулнă ĕç мухтавĕ, акă ăçта иккен ĕç ăнăçăвĕ, ĕç йуратăвĕ, ĕç ăмăртăвĕ.

Кăкăра темле хастарлăх, пĕтĕм хирĕпе кăшкăрса каламаллăх сăвă сушеђĕ кĕрсе ларђĕ пек йурлас килет, сăввăма хирти анасем, улăхсем, тырăсем, вăрмансем урлă ирĕлтерсе йарас килет. Вĕт пĕрĕмĕш хут куратăп çакна епĕ çуралнăранпа, пĕрĕмĕш хут çакăн пек илемлĕхпе савăнатăп. Акă мĕнпе хавас ман кăкăр, пайан кăкăрта çĕнĕ вăйхал! Вырмалли ыраш пĕрлештерменни 44 кектар, пĕрлештерни—5 кектар. Ку 5 кектар çинђе тырă валеç-мелле мар фонта кайаť. Вырасса ку кектара пурĕ пĕрле выраççĕ. Уйрăм акнине те шнейк-кăпа вырас текенсем пĕрле выраççĕ. Шнейк-кă çинђен тем те пĕр сăмах сарса çўрекенни-сене итлекеннисем кăна: лайăх вырмасť пулĕ тесе пĕрлешмен. Нумай мар вĕсем. Нумайĕ-шĕ пĕрлешсе выраççĕ. Хаљ лайăх вырнине кура вырнă ђух та ђылай пĕрлешрĕç пĕрле-шеççĕ те.

Пĕрле выракансем пĕђĕк анасем çине çитĕç-çĕ те вырса пĕтерсе унтах çĕмел туса хă-вараççĕ. Ани хуçи ку кĕлтене колхос лашипе хăй кўртсе, хăй çапса пуçтарса кĕмелле. Ĕç-лесе çитереймен хуçалăхсене колхос пулăш-са параť.

Çуртри йăлтах пĕрле.

Ĕç планĕсен вĕсем малтанах хатĕрлесе пыраç-çĕ. Сĕлĕ вырнă ђух миçе кун ĕçлемелли, миçе ĕçлекен кирлĕ пуласси—йăлтах паллă. Анкар-тинђен йепле, миçе кунта, миçе çын ĕçлесе

пĕтерессине те лайăх пĕлсе тăраççĕ, йепле уйăрасси те паллă.

Шутласа пăх-ха вулакан. Нумайах пулмасť çак хресђенсем—„Ыраш“ колхоçнĕксем пĕђђен хуçалăхра ђухне хăйсен ĕçне план тăрăх туса пыма пĕлни? План мĕн иккенне те пĕлмен вĕт. Хаљ план çинђен асăнни сана темле питĕ кивелнĕ сăмах çинђен, кулленхи йапала çинђен асăннă пек туйăнаť ĕнтĕ. Йатлан пулĕ мана уншăн та. Анђах ђăннипе пайан колхоса кайса курсан—план çинђен калани те вырăнли курăнаť. Унта есĕ комуниссем, комсомолĕссем, ăстаçăсем, акрономсем кăна мар, колхосри хресђенсем; ђухăнсем, патраксем, вăтамсем, хăйсем колхос тума пулгарнине, колхосра ĕçлеме пултарнине, курса тĕлĕнетĕн. Халĕ вĕсем колхос йалавне çĕклесе ăна тăвассишĕн калама çук вирлĕн, калама çук хĕрӳллĕн, калама çук патгăрăн каласа хăйсен ĕретне мĕлйунĕ-мĕлйунĕпе йертме пултараççĕ.

*
* *

Ырaш вырнă çĕртен инçех мар пĕр пĕђĕкрех улăх урлă Шетмĕ шывĕ хĕррин ђе колхосăн çуртри хушшинђи пĕр пĕђĕк сукмакпа икĕ хĕрарăм аллисене сар ђеђексем тытнă çӳреççĕ. Те ыраш вырса пĕтернĕскерсем вĕсем, те тухман та вырма. Мĕнле пулсан та йерçӳллĕрехскерсем пулмалла. Епĕ колхоса килнине пĕлсе йурийех пули:

— Колхос тырри çинђен ђеђексем татса

илтӗмӗр-ха, аван пулђӗҫ вӗсен тыррисем, тет пӗри.

— Лайӑх ҫӗре касса илсен те пулмасан тата терӗ тепри.

Хӑйсем иккӗш те майраллах тумланнӑ.

— Ҫук, куншӑн мар, ав ыттисем сӗллисем йунашарах пулин те уйрӑмах нађартарахиҫ, вӗсем тасатса акрӗҫ, иртерех акни те усӑллӑ пулђӗ пулмалла,—ответлет хӗрлӗ тутӑрли.

Ним суймасӑр калап сире: ман пӳ ҫӳлӗшех вара сӗллисем. Ахаљтен мар Упа ҫырми ҫыннисем:

— Йепле пуҫтарса кӗрӗ пирӗн колхос ҫуртрине, ӑҫта ђикӗ,—теҫҫӗ.

Ытти уйрӑм хуҫалхри хресђенсен пӑрҫа— йасмӑксем те колхосӗннинђен уйрӑмах нађар. „Ыраш“ пӑрҫи те йасмакӗ те ҫӗнӗ, хулӑм тӳшек пекех выртаҫҫӗ. Пӑрҫи ҫине кӗрсе кайсан ашса тухмалла та мар. Хутаҫҫисем шӗшлӗ аври пек. Кашни пӑрҫа ҫумне куклене-куклене ларса, 3–4-шер хутаҫ татса илтӗмӗр. Ҫисе пӑхмасӑр ӑҫтан ђӑтан.

— Ҫакӑ ӗнтӗ пољшевикла акса пулнӑскер, тесе уҫрӗ пӑрҫа хутаҫне комсомолӗс шутникскер.

Кӗркуннерен пуҫласа пӗтӗм 42 хуҫалӑхри ӗҫ выђӑхӗ пӗр ҫӗрте пулаӗ. Халӗ пӗтӗмпех пӗрлештерсе ҫитереймен. Кӑҫалђђен ӗҫ выђӑхсем уйрӑмтарах пулнӑ пирки, ђылай ҫӗрте ђӑрмавсем пулнӑ. Ҫавӑнпа та колхос кӑҫал ку выђӑхсене пӗрлештерсе пӗрле ҫитерсе усра-

малла тунӑ. Ҫак тӗле ҫитесси татах та хӗн, темпекех йӑвӑр ӗнтӗ. Авалран уйрӑм хуҫалӑхра пурӑннӑ хресчен, авалран хӑйӗн выҫӑхчӗрлӗхне пӑхса усрамаллипе унпа ӗҫлемеллине пӗлнисӗр пуҫне урӑх нимех пӗлмесӗр пурӑннӑ хресчене пӗрлешӳ ҫулӗ ҫине куҫасси, халиччен унашкал пурӑнӑҫра пурӑнса курман йапалана тума ҫӑмӑлах мар. Ҫӗре пӗрлештернӗ чух нимех те мар,—каснӑ та илнӗ, пӗрле ӗҫлеме пуҫланӑ. Ӗҫ выҫӑхсене пӗрлештернӗ чухне ун пек мар. Хӑшпӗр вӑтамсем, пухура пӗрлештермелле йышӑнсан нимӗн пӑшӑрханмасӑрах, нимӗн куҫанмасӑрах лашисене пӗрлешӳллӗ витене илсе кайнӑ. Хӑшӗсем киленчен ҫавӑтса тухаччен малтан, вӑртӑнтарах, лаши мӑйне ыталаса илсе йӗрсе те пӑхнӑ. Хӑй тем пекех йӗрес марччӗ, йӗрни аван мар, кӑна вӗт хамӑр тӑватпӑр, пӗрлештерни—таҫта илсе кайни мар, хамӑрӑнах пулаҫҫӗ, ҫӗнӗ хуҫалӑх, ҫӗнӗ пурнӑҫ тӑватпӑр вӗт, ҫын хушнипе, хӗсӗрленипе мар, хамӑрах ҫӗнелетпӗр, ырӑ пурнӑҫ тӑватпӑр, тесе шухӑшласа тӑнӑ вӑхӑтрах куҫҫуль йухтарнисем пулнӑ. Хӑшӗсем тата колхосра тӑманисемех ӗнисене пуса-пуса пӑрахнӑ. Хӑшӗсен арӑмӗсем „Ҫавах калхуса кайаҫҫӗ“ тесе сурӑхсене пӳрте путексене ӗмӗртме кӗнӗ чух упӑшкисенчен вӑрттӑн, тапса пӗтернӗ, ҫӑмӗсене каса-каса илнӗ. Мӗскер, пулман пуль клас тӑшманӗ сӑмах сарнипе.

Тӗлӗнмелле мӗн хресченӗнчен те: хӑйнехӑй йатлат. Хӑйех йӗрет. Рапоччи, рапоччи

кунта пулсан—ун пек мар. Вăл пĕрлешӳре пиçнĕ, пĕрлешӳре ӳснĕ, çампа та вăл çирĕп шухăшлă, çирĕп ҫĕреллĕ.

Çакнашкал каланисене илтсессĕн пĕрре шутласан кулмалла пек, тепĕр йенҫен—татах та шухăша йарать. Мĕн ыйтнине правлени пуçлăхĕ каласа парать. Хуть ҫихвăрсем ыйт, хуть малашнехи ĕç çинҫен ыйт хиртех пĕлетĕн. Хут çинҫе ҫакаланса мар, тăнлаврах ун ҫихвăрсем те. Плокнот çине çырса пыма та ĕлкĕрейместĕн. Çырса илмесĕр нимпе те ҫăтмалла мар.

Хĕвелĕ вара çăвах кăларасшăн пулмалла пĕçертет. Тĕлĕнтерҫĕ ĕнтĕ ку хĕвел пайан ыраш пуссинҫе. Ыран пĕçертмеллине те пайанах пĕçертсе пĕтересшĕн пулас. Калаçать правлени пуçлăхĕ. Кĕç шнейккă ҫиперех ĕçлеменнине сиссен йусама ҫупать, вĕтĕр-шакăрсем лашасем айне пуласран та ҫупса кайса тытса айаркарах кайса йарать, ĕçре кăтартса та пырас пулать. Пĕр ĕçне туса пĕтерсен, тарне шăлса илет те, тата тепĕр ĕçе тытăнать. Армансене те сыхламалла, машшинсене те илсе килмелле т. ыт. те. Çапах та вăл ĕçлеме йăвăр темест. Тăрăшать. Хăй вăл хута та сахал пĕлет.

— Халĕ пĕлет малалла карăмăр ĕнтĕ, нимле ĕç те хăрушлă мар тин, тет.

Çапла вăл. Пĕр-пĕр анлă шыв урлă ишсе каçма шутласассăн малтанах шикленерех тăратăн пек. Мĕншĕн тесен 1-мĕш хут калатăнха вĕт. Варнерех ишсе пыратăн. Кĕç анса кайас

пек, кĕç тем кĕлеткерен йарса тытас пек. Çапах та ишсе каçса кайатăн. Тепĕр йенђен вара питĕ хатăрăн, хастарлăн, паттăрăн тăратăн. Çав тери пысăк шыва çĕнсе пăрахнă-ха вĕт, текех ĕнтĕ ун урлă ишсе каçасси нимĕн те мар. Ку йенђе илемлĕ. Кунта пурнăç вĕрет. Мĕн ђухлĕ илемлĕ ђеђек, илемлĕ йывăççем— çамрăк патмар йывăççем. Вĕсем йăлтах çĕнĕрен çитĕннĕскерсем Ех, шăрантараççĕçке кайăкĕсем йурра.

Еçле, ĕçле, ĕçле çи-и-и,
Ĕçле, ĕçле, ĕçле çи-и-и...

Каçасса ку шыв урлă ишсе каçнă, анђах ишмеллисем татах пур-ха сыхлансах пымалла. Варнерех çитсен те каçас умĕн те тĕпне путарасшăннисем пулма пултараççĕ. Ишмеллисем умра пурах. Тĕппипех каçса çитеймен.

Çавăн пекех туйăнса карĕ претçетаттĕл калани. Калаçаť претçетаттĕл. Шнейккă йанăраť. Колхоçнĕксем хăйсем те пĕђĕк çырмари тăптăрă шыв шăнкăртатса вылтнă пек илемĕн шăнкăртатса калаçаççĕ. Хĕрлĕ тутăрлă колхос хĕрĕсем йаланах кулса ĕçлеççĕ шереметсем. Те кун каçађђен те ывăннине сисмеççĕ вĕсем, хĕрупраçсем ĕнтĕ...

* * *

Шетмĕрен кунтарахра, айлăмра усрав вăрманĕ пек йăмраллăх. Тӳп тӳрĕ ансăртарах урам. Çак урамăн икĕ йенђе пĕђĕкрех, лапђăкрах пӳрт сем лараççĕ. Хăшĕ пĕђĕкке пулин те илем-

лĕ. Нумайăшĕ ку çуртсен килкарти алăкĕсем вĕрлĕк алăк. Нумайăшне улăм витнĕ. Çак урамра колхос ђленĕсем нумайтарах. Ак йăвăç улми шăрши кĕрет. Хăш çурђĕн 3—4 улмуççи пур та, йăтайми улма лараť. Улмисем хĕпхĕрлĕ. Китай улми ђылай ку Ђетрикре. Хăйсен йăвăрăшсемпе улмуççи тураттисене авăнтарсах антарнă. Тĕкĕ те ђăтса тăрайман.

Хăш çуртсем умĕнђе ђеђексем пур. Вĕсем колхос ђленĕсем мар. Мĕншĕн тесен ку çуртсем хăшĕ калама та çук пысăк, урлă каçа 7—8-шер йупаллă пахђалăк. Йуписене кирпĕђрен тунă. Пӳрт никĕсĕсем те кирпĕђ.

— Авалтан ђăпта çаптарса, темиçешер теçеттин çĕр тара илсе ђухăнсене ĕçлеттерсе пурăннă вĕсем пирĕн йалта, кăçал та тара тытсах çĕлетттереççĕ-ха, терĕ мана пĕр колхос ђленĕ. Вĕсенђен Мĕтри Афанаçйĕв—колхосра пĕр кĕреçепе ăсса çурхи шыв çине сапса йухтарса йарăттăм, тесе пурăнаť. „Мĕтри Афанаçђă“ тесен Шетмĕ йенђи вулакан пĕлет. Ку йата илтсенех ăна „Куç пăваť“ тени аса килет, „паллă йумăçа“ аса илет.

— Пĕр минут вăхăтĕнђе пӳрте шыв тултарма пултараť...

— Ун хура кĕнеке пур тет.

— Хăй вăл вăрă тет, анђах ăна тытма май çук тет, халăх тытма пырсан пӳртне шыв тултараť те, лартаť, тет.

Çаксене епĕ пĕђĕккĕ ђухнех калађђĕç. Ун патне çĕршер çухрăмран пухăннă. „Пурне те

тума пултарать вăл, усал йернине уйăрма пултарать, алурана кассан сурса тӳрлетет, çĕлен сăхнине ҫакарать, пурне те, пурне те тăвать". Пули-пулми çын калаçма пултараймăн унпалла. Сĕт, çу, укçа, тырă, пир кăна мар, лаша ĕне тем тепĕр панă вăл „паттăра" унах темиçешер çĕр станок ҫăпта çапса тăнă. Акă мĕн ун куллenхи, çĕрхи „ĕçĕ".

Акă мĕншĕн вĕсем колхоса сийенлĕ çынсем, акă мĕншĕн вĕсене колхоса илмеççĕ те. Акă мĕншĕн вĕсем колхоса пĕр кĕреçепе ăсса çурхи шыв çине сапса йухтарса йарасшăн. Акă мĕншĕн кашнă иртмессерен колхос кĕнҫелерĕ çине сиввĕн пăхса иртеççĕ, колхос çинҫен çĕр çывăрмасăр сăмах тăкаççĕ, ăна çыртассишĕн шăлĕсене хăйраççĕ.

* * *

Сипсимĕс çеремлĕ урамра сывлăма йĕрлесе çӳреççĕ каçăр сăмсаллă, йап-йака çăмлă таса сыснасем.

— Кăсем сирĕн сыснасем-и?—тесе ыйтсан:

— Урамрисем пирĕн мар, анҫах вĕсем пурте пирĕн йышши йакширски сыснасем. Пирĕн сыснасенҫен йалĕпех çакнашкал таса вăрлăх ĕрҫесе карĕ 3 çул хушшинҫе, терĕ В. Петров. Унтан пĕҫĕк çӳрĕсем те нумай. Пурте йака, усăнҫăк хăлхаллă.

— Ăрх-ăрх, ăрх,—тесе кăна çӳреççĕ ваттисем.

— Ҫишик, ҫишик, ҫишик—терĕ те Петров,

колхос выђăх картинђен пĕр пĕђĕкрех ĕне çӳллĕш сысна аçи сиксе тухрĕ. Лаша пек каланине те пĕлет. Кайса вырт, тесен, ђăнахах карта йенелле сулăнаť. Хăйсен сыснасем йакширскисем ваттисемех 19. Сурăхсем 12, Ђеркесски така 2, вăкăр иккĕ. Пĕри краснокорпатски ăрат. Ђĕрĕлле 40 пăт туртаť вăл. Йалти кĕтӳрех çӳрет. Хресђенсем Ђетрик таврари йалсем 3—4 йал унпа усă кураççĕ. Ку выђăхсем пурте пĕрлештернĕскерсем, йе илсе килнĕскерсем. Вĕсене усрама хĕлле вађђи çуртсем хатĕрленĕ, хатĕрлеççĕ те. Пĕђђен хуçалăхри пек кунĕн-çĕрĕн пĕр çийĕсĕр картара, пăхĕсем çинђе пурăнмалла мар. Кашни сыснан уйрăм вырăн, кашни лашан уйрăм пӳлĕм пулаť.

— Малашне „Ыраш“ сыснасен нумайтарах ĕрђетмелле. Çвиновотсойуспа 54 сысна ами усрамалла токăвăр тунă. Кăçал октăпĕр уйăхне çитнĕ çĕре сыснасене усрамалли вырăн туса лартмалла. Пĕттисене вађђи 50 уйрăм вырăн пулаť (ăшă çурт) ыттисене вађђи çăмăлтарах çурт туса лартатпăр. Çак çуртсене тума пĕтĕмпе 2500 тенкĕ кирлĕ пулаť, сысна амисене илме тепĕр 2500 тенкĕ пĕтмелле, пĕтĕмпе сыснасене ĕрђетсе йарас тесех колхоса 5000 тенкĕ укçа кирлĕ. Кунтан хăш пайне Çвиновотсойуса токăвăр тăрăх памалла,—раппăрт панă пекех тăкаť сăмахĕсене Петров В. правлени ђленĕ.

— Машшинсем те çултан çулах хушăнса пыраççĕ. Хађхи вăхăтра: шнейккă, молот-

тилккă, 2 вейăлкă, 1 сорттировкă, 1 улăм турамалли, 2 улма купаламалли, 1 çейăлкă (11 ĕретли) 8 тимĕр çӳре, 13 плук: Пайан вĕсенђен шнейккă кăна ĕçре. Ыттисем сарайсенђе йусавлă лараççĕ.

* * *

Урам вĕçĕнђе лутрарах та милĕк пуçлă йăмрасем. Ку урам вĕçне çитсен çак илемлĕ йăмрасем хушшинђе йал варрипе тăп-тăрă Шетмĕ шывĕ сарăлса выртат. Шетмĕ тăрăх тăвалла пăхсан, киносенђе курнă ђухнехи пек илемлĕх аса килсе кайат. Ирĕлтермеллипех ирĕлтерет вара колхос арман пĕви хăй таппине. Шетмĕн икĕ айккинђе пăђах йăвăç. Хурăн, хурама, ăвăс, хăва, пилеш. Кашни харпăр хăй тураттисене Шетмĕ йенне сулăнтарнă. Хăшпĕр йăвăç лассисем шыва тĕкĕнсех тăраççĕ. Пилешсен хĕрлĕ лăссисем пушшех йăвăрăн авăна-авăна аннă. Хăш тĕлте шулђисем те палăрмаççĕ, хĕп хĕрлех пилеш.

Вĕсен айĕнђе ађасем шыва кĕреççĕ. Çӳлерехре колхос хурĕсем, кăвакалсем йарăнса çӳреççĕ. Хушăран ђĕкеçсем: — ђĕввик-ђĕввик! тесе тăр шыва ђăмса ђӳхенсе кайаççĕ. Квакалсем те ђăмаççĕ те, тем тери тăрсан тин тухаççĕ.

Çакнашкал çĕрте лараççĕ колхос ђленĕсен çурђĕсем. Хăшин анкартийĕ çак Шетмĕ хĕрнех тăрăнаççĕ. Кашнин анкарти вĕçĕнђе кĕпесем çумалли картлашкасем тунă. Анатарахра

хайхи колхос арманĕ икĕ ҫулне хантăртаттарса ларат.

Кунĕн-ҫĕрĕн арман та авăрат, ҫăнăх тăват.

Ку армана епĕ пĕҫĕк аҫа ҫухне Йункунсем пĕр майра хуҫа тытса тăраҫҫĕ. Астăватăп куккисем патне кайсан ҫак майра мăн шĕлепкипе аннине куратгăмăр та:

— Уй, майра хуҫа килет, сараппанпе хупласа хĕртет, — тет вăл, тесен хампар айне тарса кĕреттĕмĕр. Ҫăнах та усал пулнă мĕн вăл. Пĕве пĕвелемешкĕн хуса аннă та, ук ҫа тенкине, паман. Хресҫентен ҫăмарта, сĕт-ҫу таврашĕ: укҫине кайран паратăп, тесе илнĕ те, нихăҫан та тӳлемен. Хăйĕн ĕнисен сĕҫĕсемпе, ҫăвĕсемпе тăранайман пулас.

Кайран ку армана Ҫеркей Йекорҫҫă хуҫа тытнă. Ҫак хуҫасем тытнă вăхăтра та, кайран та, никҫан та ăна кăҫалхи пек ир пĕвесе лартман. Кăҫал колхос апрел уйăхĕнҫех пĕвесе лартса авăракан тунă. Шетмĕ ҫинҫе армансем кăҫал мар, нихăҫан та ҫакнашкал ир пĕвелеймен. Пĕвенĕ вăхăтра мăнкун.

— Ай-й, мĕн вĕсен, усалсен, пĕве тытасси пулат-и? Майра хуҫа, йе Ҫеркей Йекорҫҫă пулсан тавну пулса ларнă, тесе сăмахласа ҫӳренĕ ĕлĕкхи „йал пуҫлăхĕсем“.

Колхос ҫленĕсем пурĕ пĕр шухăшпа тухса, пĕвене 2—3 кун хушшинҫе авăрмалла туса лартсан, йал халăхне нумайăшне пуҫне пăркаласа шухăшлатарнă. Темиҫе ҫухрăма ҫил арманне кайаҫҫен — йалтах сухана тухаҫҫен

авăртма май туса панăшăн пуçпа лайăхрах шухăшлама пĕлекенсем нумайĕшĕ кайран колхос Правленине тав та тунă.

— Çавăн пирки, кун пирки, йерçмен пирки укçалла пулин те пĕвеме анаймарăмçке, тем хăйамађĕ калаççĕ те... тесе çÿрекенсем те пулнă.

Анђах, сăмах—сăмах вăл. Пире ĕçпе туни, ĕçре кăтартни кирлĕ. Кунашкал калани сăмахпа икенне те епĕр курнă, пире улталама хĕн.

## Пĕве кайаҭ!

Çанталăк кунĕпех уйар тăҭĕ. Каçалапа сисмен çĕртенех Тӳрекасси йевҭен пĕҭĕкрех таҭка çăмăр пĕлĕҭĕ тухрĕ те, калама çук хытă çуса карĕ. Пĕр самантрах урамсенҭе шыв çырмари пек йухма пуçларĕ.*)

— Тан, тан, тан, тан, тан, тă-тă-т-т-т...

— Мĕн пулнă?

— Мĕн пулнă?

— Тревокă!

— Пĕве кайаҭ, пĕве...

— Колхос пĕви кайаҭ!

Шап шур халăх пĕве патне анса тулҭĕ. Çăмăр иртсе карĕ. Шыв вăйланса—вăйлансах пыраҭ. Пĕве сатворккине уçайман. Кĕç кайаҭ, кĕç ӳпĕнет, кĕç колхос армансăр йулаҭ, тепĕр пĕрик минутранах пинĕ пинĕпе ĕçхалăх мулĕ, тупăш çăлкуçĕ йухса кайаҭ, кĕç ӳпĕнет...

Колхоçнĕксем хирти ĕçрен килсе çитеймен, васкаççĕ вĕсем, кашнин шухăшĕ пĕве çинҭе, хыпаланаççĕ вĕсем пĕвене çăласшăн, анҭах нимпе те ҭас çитмелле мар.

---

*) Ĕç Кушкă—Шетмĕре пулса иртет.

Пĕве патĕнҫе шап-шур халăх. Ватти, вĕтти, йашши, хĕрупраҫĕ, пур те тăраҫҫĕ. Хăшĕ аллисене кайалла тытнă, хăшĕ кулкалаҫҫĕ. Пĕве кайаӑ вĕт, пĕве йухса кайаӑ! Мĕншĕн сатворккăна кĕрсе уҫмаҫҫĕ, мĕншĕн, мĕншĕн? Ўпĕнет вĕт пĕве!

— Колхос пĕви кайтăри, мĕн сысас...

— Укҫа пур вĕт вĕсен, пĕвелĕҫ-ха...

Пĕве кайсан колхоҫнĕк маррисене те авапах мар вĕт, арманпа вĕсем те усă кураҫҫĕ-ҫке!

Мĕншĕн, мĕншĕн кĕрсе уҫмаҫҫĕ, йывăрах та мар вĕт ăна тума... Ўпĕнет пĕве, пĕве латлатмах пуҫларĕ. Латлатаӑ пĕве, мелник пĕђђен ңимех те тăваймасӑ, темиҫе те кĕрсе тухрĕ вăл пĕве ҫине, нимпе те сатворккăна уҫса йамалла мар пĕђђен вăйпа. Пĕђђен мар вăл. Пĕђђен мар вулакан, унта Йаккăвлĕв „колхоҫнĕк“ те пулнă. Анђах вăл сатворккă патне кĕместӑ, „хăраӑ“ вăл унта кĕме.

— „Колхоҫнĕк“ кĕмест те, ăҫтан ытти ҫынсем кĕђђĕр...

— Малтан колхоҫнĕк кĕтĕр, ун ҫынсене ђĕнмелле ĕнтĕ шутпа..

Шыв тулсах пыраӑ. Тĕппипех пăтранса карĕ. Йăвăҫсем йуха-йуха анаҫҫĕ. Кулаҫҫĕ вăрттăн хăшĕ, хăшĕ мар кунти халăх пурте пекех „хăшĕсем“ иккен. Пĕр комсомолĕс та, пĕр патрак та ҫук иккен кунта, ĕҫре вĕсем, хирте.

Колхос претҫеттатĕлĕ Моросăв ҫитрĕ хиртен, хашкаӑ Моросăв, сывлаймасӑ те хăй.

— Халăх, халăх! Çăласҁĕ пĕвене, çăласҁĕ, пулăшăр тархасшăн...

— Çук çук, тин нимех те тăваймастăр...

— Кам вилĕм шыраҭ, çавă кĕрет çав,—ҁĕрлех вилĕм çине кĕрекен çук пуљ аҁам...

... Лат, лат, лат... пĕве латлатаҭ, кĕç кайаҭ, ҁылай тайăлҁĕ... ҁăнах та хăрушă. Моросăв пĕре кăвакарса, тепре шуралса килҁĕ те, тӳрех тӳнсе кайма тăнă пĕве çине кĕрсе карĕ...

— Айуй, а-х, тесе йаҁĕ пĕве çумĕнҁе тăракан халăх, кăртах турĕç хĕрупраç шăмшакĕсем.

— Кил, Йаккăвлĕв, кил пĕвене çăлар, йеплe ҁăтатех, сан ҁĕре ех, халăх, халăх...

Йаккăвлĕв та, халăх та сатворккăна уçма кĕмест.

Хирĕнсе ларнă сатворккăна мелникпа Моросăв нимпе те уçса йараймӑççĕ. Пĕве çаплах латлатаҭ, кĕç ӳпĕнет, кĕç шыв тĕпсĕр пуççăр кĕрлеме пуçлаҭ, кĕç Моросăвпа мелник те шыв айне пулаççĕ...

Кĕç... кĕç, кĕç...

Пĕтĕм ҁĕри вăйĕсемпе хирсе, пуртăсемпе касса сатворккăна уçса йаҁĕ Моросăв. Çав тери кайасшăн тулса çитнĕ шыв пĕгĕм пĕвене ҁĕтретсе йаҁĕ, Моросăв ним пĕлмийех пулса карĕ. Те хĕпĕртенипе, те ҁĕри ыратнипе ним тума та пĕлмест. Пĕве çинҁен те тухмаҫ. Шыв кĕрлет. Кĕрлет шыв. Моросăв килиҁҁен пăвăнса тăнăскер уçса йанăшăн савăнсах карĕ пулас вăл, кĕрлет...

Пĕве çумĕнҁе халăх ҁĕнмест. Кам пĕлет

темме ђёнмест вăл? Хăшĕ пĕри пуçĕсене пăркаласа килелле утрĕç, хăшĕ унтах пăхса тăраççĕ. Моросăв пĕве карлăкĕ çине уртăнђĕ те калама çук васкаса йухакан шыв çинелле темшĕн тарăхса пăхса тăђĕ. Çав вăхăтрах колхоçнĕксем те ђупса çитрĕç. Çитсен тÿрех пĕве çинђен калаçма пуçларĕç. Анђах Моросăв аптранипе вĕсене нимех те калаймарĕ. Йаккăвлĕв çинђен каласшăнђђĕ, „халăх“ нимĕн те пулăшманни çинђен те каласшăнђђĕ,—вăйхал çитмерĕ ун çак ђĕрене ыраттаракан пулса иртнĕ ĕç çинђен каламашкăн.

Шухăша карĕ вăл. Таçта та çитсе çапăнђĕ. Ĕлĕк тарçăра ĕçленĕ ђух вĕсенђен йалти „халăх“ çĕр туртса илнине те аса илђĕ. Краштăн вăрçинђе çапăçни те асрах. Краштăн вăрçинђе çĕнтерни пекех туйăнђĕ ăна пĕвене уçса йани. Анђах унта вĕсем нумайăнђђĕ, кунта вăл пĕђђен пекех çăлђĕ, ку пушшех шухăша йарать. Иун вĕремеллипех вĕрет. Краштăн вăрçипе кĕрсе кайнă ђухне вилĕм çинех кĕрсе кайни паллă марђђĕ. Çĕнтеретпĕрех, тесе кĕнĕђђĕ вĕсем. Кунта вăл латлатнă çĕрех кĕрсе карĕ. Кунта вилĕм çине кĕнĕ пекех туйăнђĕ, çынсем те йухса кайать, тесех шухăшланăђђĕ. Çук, ђăтма вĕреннĕ—хурçă ђĕрене çавтери вăйлă шыв та çĕнтереймерĕ пулас.

Вулакан: Йаккăвлĕв „колхоçнĕк“ çинђенех шухăшлать пулĕ-ха халђ. „Йепле колхоçнĕкха вара вăл?“ тет пулђ. Есĕ кăна мар, епĕ те вăл колхоçнĕк пулнинђен тĕлĕнетĕп. Ку пĕр

факт кăна вĕт. Ун çинҫе еп урăх фактсене те пĕлнĕ. Кунта пурне те каласа пĕтереймĕп. Вăл фактсем çинҫен тепĕр ҫух тĕплĕнех пĕлтерĕп. Халҫ пĕвене йухтарса йарасшăн çĕрле кайса пĕве тĕккин савăлсене кăларса пăрахса хăтланни çинҫен, анҫах çапах та йухтарса йарайманни çинҫен, çăнăхне хăй пăсса йал тăрăх йатарласа колхос арманĕ çинҫен елеклесе çӳренипе, колхос тыррисем çине йури выҫăхсене кăларса йани çинҫен пĕлтеретĕп. Пĕлесех килет пулсан, унăн ашшĕ ĕлĕк пĕр çу арманĕ, тепĕр кĕрпе арманĕ тытни çинҫен те пĕлтерме пултаратăп. „Ма илнĕ ăна колхоса?“ тейĕн. Ăна епĕ те ыйтрăм. „Уҫҫиттĕл тесе, армана ĕлĕкех тытнă вĕт, халĕ вăтам хресҫен тесе, илнĕ ăна“ терĕç мана. Çапла майпа илтнĕ иккен Йаккăвлĕв колхоçнĕк йатне. Арăмĕ ун: „аҫасене аслă шкулсене йарассишĕн колхоса кĕтĕмĕр, тесе çӳрет Кушкăра. Аҫисем: „раскулаҫҫиҭ тăвасран кĕтĕмĕр“ теççĕ.

Çапла вулакан. Çакăн пек çĕрте шăтса çитĕнеççĕ пирĕн колхоссем. Тулта кăна мар, шалта та пулма пултараççĕ колхос тăшманĕсем. Тем пек путарасшăн, тем пек йухтарасшăн пулсан та, вĕсен ӳсĕмĕ йухмасҭ, путмасҭ, хурçăлансах, малаллах пыраҭ.

* * *

Пĕве кăна мар, кăçал кирпĕҫ савăҫĕ те туса лартмалла пулнă. Ăна тумашкăн сахал

мар вăйхал, сахал мар хатĕрсем кирлĕ пулнă. Хăми çук, пăтисене хăвăртах тупмалла мар. Ĕçлеме те çынсем çитмеççĕ. „Колхос ĕçĕ“ тесе хăшпĕрисем укçалла та ĕçлеме пымаççĕ. Пĕвене туса лартсассăн колхоçнĕксем хăйсемех тапаçланса пĕр çырма хĕрне савăта туса лартаççĕ—лартаççех. Кăна вĕт каллех çўлтен ĕхĕтленипе, çўлтен каланипе мар—хăйсем шутласа, хăйсем тытса туса лартаççĕ. „Хĕп, ăна епĕр тăвайас çук“ темеççĕ. Кăна тунă ђух та тем ђухлĕ ђăрмавсем ђăтнă. Хуть ăçта çит—унта колхос тăшманĕ ђăрмантарать. Пирĕн çул çинђе хăй урине урлă лартать. Çуллахи тĕттĕм каççенђе кирпĕђ тума тăм илмелли шăтăксене те питĕре-питĕре кайнă. Тăм йăтмалли ђĕрессене те йухан шыва кайса пăрахнă, кирпĕђе хĕртмелли кăмакана та сăтăрласшăн тапăннă, тем те, тем те. Анђах, ун пеккисене çĕнтерсе, путарсах пыратпăр епĕр.

— Епĕр курнă. Каçалапа лартсах шăварса хăварнă улмуççисене ирђђен çавапа çулса, кăкласа кайнине те курнă, анђах улмуççисене çапах та лартса ђĕртрĕмĕр, çĕнĕрен ĕçлемелли пулнă пулин те сат ђурăмăр,—терĕ претçеаттĕл хастарăн, савăт çумĕнђе калаçса тăнă вăхăтра.

Ку савăтăн тăрăшшĕ 80 метр, урлăшĕ 7 метр. Савăта туса лартнăранпа 40000 кирпĕђ туса хатĕрленĕ. Ку кирпĕђ йăлтах хăйсен строиттĕлствине кайать. Савăта туса лартмах 2000 тенкĕ укçа кирлĕ пулнă.

Кусемсĕр пуçне çу арманне йусаса лартнă. Халĕ вăл та ĕçлет. Тепĕр çĕмрĕк çил арманĕ илнĕ, анђах ăна лартма шухăшласа пăхнă тăрăх питĕ нумай укçа кирлĕ пулнă пирки, тата тупăшне те сахал парассине кура йусама шутламан.

— Çăм машшинĕ те ђипер ĕçлет. Кăçал çуркуннехи çесонра 300 тенкĕ ытла тупăш панă. Çулталăкра 1000 тенкĕ ытла тупăш парать, тет прегçетаттĕл. Колхосра кам мĕн ђул ĕçленине шута илсех пыраççĕ, анђах нихĕш колхос ђленĕ те хăйне тивĕçлĕ укçине 1928-мĕш çултанпа та илмен. Кама питех йапала кирлине кура колхос йапалан илсе парать.

* * *

1928 мĕш çул. Клас тăшманĕсем колхос çинђен сăмах та уçтармаççĕ темелле. Хаљхи вăхăтра ку тăшман нумайăшне вăрттăн—куç хыçĕнђе сийенле пулсан, ун ђух кĕретĕнех нухусем туса колхоса хирĕç йышăнăвсем тунă. Хыпкаланаççĕ В. И. Красновсемпе Моросăвсем. Йепле те пулин орканисатсилесђĕ, тăвасахђĕ ку колхоса. Анђах йалти ĕçхалăх масси пĕрлешўллĕ ĕçĕн ăнăçлăхне, хаваслăхне, ырăлăхне нимпе те тăна кĕрсе çитесшĕн мар. Тăшман кĕвĕçет. Тăшман хытă тапаçланать. Ăна итлекенсем те пур, вĕсен арманĕ çине шыв йаракансем те пур. Орканисатсилесе йарас патнех çитеççĕ. Халăх çинђен пĕри çыпăçулăрах, тăшмансене майлăрах тухса калать те,

колхоса йнланса ситеймен халăх хушшинҗе сар пыл пуракĕ çине тумлак тикĕт йарса пăснă пекех пулса тăрат̆. Каç җас килсе выртман пулин те ыйăх килмест. Ирпе каллех ирех тăнă. Пайан пуху, ыран пуху, каç пуху, ир пуху. Çав тери тăрăшнипе вăйлă кĕрешӳре 8 киллĕ „Ыраш" çуралат̆. Мĕн тăвас-ха, клас тăшманĕ çĕнтерéймерĕ вĕт, а!

— Шыва тытса перетпĕр колхоçнĕксене!

— Çунтарса йаратпăр!

— Кĕркуннене çитсен правлени җленĕсем укçисене пуçтарса тухса тармалла, тет...

— Колхоçнĕксене таçта Çĕпĕре хуса йараççĕ, тет...

— Правлени җленĕсем пурте вăрăсем вĕт, сире выçтарса вĕлереççĕ ĕнтĕ, — (колхоçнĕксене —М. В.) йал тăрăх клас тăшманĕн сăмаххисем җупма пуçлаççĕ. Капла та май килмерĕ. Урăх май тупас пулат̆.

Җĕртсе йараççĕ, выҗăхсене сийенлеççĕ, тырăсене те сийенлеççĕ. 43 йатакран 11 йатака кăна тăрса йулат̆ колхос. Колхоçнĕтсăсем ир тăрсан выҗăхсене йал кĕтӳне йартармаççĕ. Ним тума та çук. Кĕтӳне йартарманнипе хăйсен пĕр пĕҗĕк кĕтӳ тытма лекет. Йал халăхĕнҗен уйăрăлма лекет. Çитменнине колхосра та пăтратакансем пур. Пĕр тĕлте çĕçĕсемпе те тапăçкалаççĕ.

Клас тăшманĕ кĕвĕçет. Кĕвĕçет тăшман. Кунĕн çĕрĕн колхос çинҗен сăмах тăват̆. Ăна пулăшакансем те пур.

— Пирӗнтен колхоса малалла йарса пулмасӑ...

— Тавай саланас, колхосу мӗнӳ, текенсем тухаҫҫӗ. Ҫав вӑхӑтрах колхоса молоттилкӑ килсе кӗрет те, клас тӑшманӗн акитатсине хӑйӗн акитатсипе ҫӗнтерсе илет. Авӑн ҫапиӑ вӑхӑталла 20 йатак хушӑнаӑ.

1929-мӗш ҫулта ҫӗрйӗркелӳ пуҫланса кайаӑ. Колхосӑн ҫӗнтерӗвӗ те хӑпараӑ. Клас тӑшманӗн акитатсийӗ ҫав тери нумай пулин те колхоса ҫӗнтерейместӗ. „Ыраш“ 120 йатака ҫитет.

Кӑҫал пӗр вӑхӑтра 252 йатака ҫитеҫҫӗ. Ку шутра тӗрексӗр пӑркаланса ӗҫлекенсем ђылай пулнӑ. Ҫуркуннепе ку „тӗрекленеймен“ колхоҫнӗксем хӑйсемех тухса ӳкеҫҫӗ. „Ыраш“ ҫуркуннепе каллех 158 йатакпа кӑна йулаӑ. Машшинсем килсе хӑйсем май акитатсилеҫҫӗ. Вӗсен хастарлӑхӗ ниме те парӑнмасӑ. Ҫӗртме вӑхӑтӗнђе ҫӗре йӗркелесе касса илнӗ вӑхӑтра тата 5 хуҫалӑх кӗреҫҫӗ. Хађхи вӑхӑтра 42 хуҫалӑх, 180 йатак шутланаӑ.

— Текех пирӗн колхоса нимле кулак акитатси те ҫӗнтерес ҫук, хађ ниҫта пӑркаланман хуҫалӑхсем йулђӗҫ, малашне пирӗн пата татах, татах килеҫҫӗ колхоҫнӗксем, терӗ претҫетаттӗл. Унтан кӗҫ хӑйсем йепле малалла кайни ҫинђен мӑн кӗнекене кӑларса ђихвӑрсем калама пуҫларӗ.

Ийунӗн 15-мӗшне пӗтӗм опорот 12895 т. те 20 пуса ҫитнӗ. Унтан пӗрлештернӗ пурлӑх 7355 тенкӗ те 50- пуслӑх, салатмалла фонт

3325 тенкĕ те 85 пуслăх, протуксипе ытти маттерйалсем 1190 тенкĕ те 21 пуслăх.

Пĕтĕм çĕрĕ 232 кектар шутланаť.

Хутла вĕренес ĕçре те колхос малта тăраť. 35 çула çитиђђен колхосра пĕр çын та хутла пĕлменни çук. Хăйĕнех йаçлĕ. Авалтанпа тискер сассăн çухăрса ларакан хĕрлĕ ђиркĕвре шкул тунă. Хĕл каçађђен ађасене çавăнта вĕрентнĕ, унта йалĕçтăвком кĕнђелерĕ, унтах театтăр. Хĕлле кашни икĕ ернере пек, йе кашни ернерех çпектаккăљсем лартаççĕ. Кино та килсех тăраť. Кино, йе çпектаккăљ пулнă вăхăтра Ђетрик халăхĕ кăна мар, Упа çырми те кăна мар, Йункун, Кушар, Пăрăнтăк, Кулава т. ы. те пухăнаççĕ.

Çук, текех çапмасť вăл çурăк ђан. Тăшман тем ђухлĕ тапăçланђĕ ђиркĕве тепĕр хут уçса колхос çамрăксене, ђухăн, вăтам ађисене, патрак ађисене шкул тулашне тăратса хăварас тесе. Карђăкпа стариксене ђирĕк пагне ĕхĕтлесе йараççĕ те, çу кунĕнђе çĕр каçа, кун каçа ђиркĕве уçтарасшăн „асапланаççĕ“.

Пуççапаççĕ, йĕреççĕ, йатлаçаççĕ. Ик аллипех карђăксемпе стариксем çине кăтартаť:

— Пăх, халăх йĕрет ђиркĕве вăйпа хупрĕç...

— Колхос туса хуђĕ çакна, пĕтереççĕ халăха, хуçалăха ăрсуриť тăваççĕ.

— Пире мĕн, епĕр хуť пурнăçран тухнă ĕнтĕ, хусамăра та (ђухăнсемпе вăтамсене—М.В.) асаплантараççĕ, сирĕнне те йулашки укçăрсене шăйăрса илеççĕ.

— Тавай уҫас ђиркĕве!
— Тавай уҫас!
— Хуса йарас унтан пур кĕлмĕҫсене!

Ку сахал. Шкула вăрттăн кĕреҫҫĕ те турăшсем ҫине ирсĕр сăмахсемпе ирсĕр ўкерђĕксем ҫырса—ўкерсе пĕтереҫҫĕ.

— Авă, авă мĕн хăтланаҫҫĕ колхоҫнĕксем, комсомолĕссем!
— Турăран кулма памастпăр!
— Совет та турăшсене ирсĕрлеме хушмасӑ.
— Халăх, халăх пăхăр мĕн хăтланаҫҫĕ вĕсем.
— Тавай уҫас ђиркĕве!
— Тавай уҫас!

Ҫĕр ҫывăрмасăр йалсем тăрăх ҫўресе ђиркĕве уҫас пирки алсем пустарса ҫўреҫҫĕ. Вăрттăн пухусем тăваҫҫĕ. Анђах ал пусакансем сахал. Ђухăнсен пухăвĕ. Комсомолĕссен пухăвĕ. Хĕрарăмсен пухăвĕ. Пур те вĕсем ҫак тăшмансене хирĕҫлеҫҫĕ.

— Епĕр пĕрре хупасшăн ал пуснă, иккеленместпĕр.
— Пĕр ҫул ытла шкул ађисем вĕренђĕҫ те, ăҫтан тин тепĕр хут ђиркĕве уҫас!
— Ађасене вĕрентмесĕр хăвараси вара ђирĕк тесе, тупрăр асапланмалли!
— Уҫмастпăр.
— Мĕн усси ăна тепĕр хут уҫса!
— Кам виҫĕ пус патăр ăна ремонтлама!

Ҫук, текех ҫапмасӑ вăл ҫурăк ђан. Унта 100-шер ађа вĕренет.

Çĕнĕрен пагтăр колхоçнĕксем шăтаççĕ, аталанаççĕ. Тăшман çĕнтереймерĕ, çĕнтерейместь те.

Колхоçнĕксенђен вăтам шкулсенђе те вĕренекенсем ђылай, кăçал та ђылай кĕмелле-ха.

Ёлĕк пуп пурăннă çуртран умлă хыçлăн пĕр пек шап шур кĕпеллĕ ађасем:

Победили раз
Победили два.

тесе йурласа, çерем çине хĕвел ăшшине тухса тулђĕç.

Кăсем пирĕн плошђаткăри ађасем, хамăр вăйпах усна епĕр плошђаткăна, 30 ађа ытла пурăнаççĕ унта пĕтĕмпе,—калаť ађасене пăхаканни.

Кăсенђе татах та çĕнĕ çĕнтерў, хĕрўллĕ çĕнтерў, тесе шухăшласа илтĕм.

— Малашне пирĕн уђђитлĕ те, акрономĕ те хамăрăнах пулаççĕ, ун ђух епĕр татах ђылай малалла кайатпăрха, тесе йулђĕç, аллăма ђăмăртанă хыççăн колхоçнĕксем.

Ытларикун.

Йункун тăвайккине çитрĕм те, тăратăп шухăшласа. Умра каллех хурăнсем. Пĕр вата йăмра пур та, вăл пĕтĕмпех çĕрме пуçланă ĕнтĕ. Ăшĕ те хăвăлланма пуçланă, хавшанă. Хурăнсем çинђенех куç каймасť. Ађаш та, кăмăллă вĕсем. Хĕвелĕ каçйенелле сулăннă пулин те, ним вăтанмасăрах хĕве кĕрсе кайса кăтăклаť. Кăтăклаť шеремет. Кăтăкланă май çуркуннехи хурăн шывĕ тумланă пек ўтпўрен тар тумлаť.

Ку тăвайккирен тавралла пăхсан темиçе йал та курăнаť. Пуринђен ытла Шетмĕ тăрăх ларса кайнă йалсем илемлĕн курăнаççĕ. Вĕсенђен нумайĕшĕнђе колхоссем пур. Акă „Упа“ колхос „Хĕрлĕ Шетмĕ“ колхос, „Ратканар“, „Сухаç“, Йункун колхосĕ, Çĕнĕ-йал колхосĕ. Анатрах пăхсан „Хĕрлĕ Сурăм“, „Рыккăв“ колхоссем курăнаççĕ. Нумай кунта вĕсем. Шетмĕ тăрăх ыраш пекех шăтса тухнă. Анђах „Ыраш“ колхоса çитереймеççĕ ха вĕсем хăйсен хуçалăхне.

Трак йенелле пăхсан пысăк, шавлă, илемлĕ вăрман çумĕнђе „Макçим Коркки“ комунă. Симĕс вăрман çумĕнђи çуртăн хĕрлĕ çийĕсем катаранах палăраççĕ. Умрах автопус çулне тăваççĕ. Икĕ трактăрваскасах хулăм çереме тӳшеке çавăра-çавăра пăрахнă пек хăйпăтаççĕ. Шупашкартан Вăрнара кайакан автопус çулĕ пулаť вăл.

Çирĕклĕ, VIII-1930 ç.

## Ҫӑвашсен патшалӑх истаттӗлствин

### колхоҫнӗксем валҫн ҫӗнӗрен тухнӑ кӗнекесем

1. **Н. Т. Пукров.** Ушкӑнлӑ хуҫалӑхсенҫи кулҫттурпа пурнӑҫ йӗрки. Хакӗ 10 пус.

2. **Марттынӑвӑ.** Ҫӗре исвӗҫлесси. —

3. **М. Палитски.** МОПР колхоссенҫе. 12 п.

4. **Н. Т. Пукров.** Контрактатси ҫинҫен мӗн пӗлмелле. 10 п.

5. **Микколеко.** Талккӑшпе колхоса куҫассин уставӗ. 23 п.

6. **Алакӗр.** Пулас ҫӗнӗ йал. Очҫӗрк. 11 п.

7. **Марттозитски.** Колхоссенҫе ӗҫ хакне мӗн ҫухлӗ ӗҫленине кура орканисатсилесси. 18 п.

8. **О. Антрейӗв.** Пахҫа ҫимӗҫӗпе тымарҫимӗҫ вӑрлӑхӗ тӑвасси. 20 п.

9. **Сыпковӑ.** Колхосӑн происвотствӑллӑ планӗ. 25 пус

10. **Терентйӗв.** Акмалли вӑрлӑх шӑтассине мӗнле пӗлмелле. 3 п.

11 **Йерофейӗв.** Колхоссенҫе тырпул тухӑҫлӑхне хӑпартассишӗн кӗрешер.

12. **Акр. Крикорйӗв.** Машшинпа трактӑр стантсийӗ. 8 п.

13. **Афанаҫйӗв.** Фосфорит ҫӑнӑхӗ мӗнле усӑ парат. 23 пус

14. **Хохлов.** Выҫӑх-ҫӗрлӗхе пӗрлештерер—колхоссене ҫирӗплетер. 10 п.

Колхоссенҫе ӗҫе йӗркелесси. (Колхоҫнӗксен пӗтӗм Сойусри канашлӑвӗ йышӑннӑ постановлени) 4 пус

**Ку кӗнекесене потребкопперасти урлӑ илмелле.**

## Ҫӑвашсен патшалӑх истаттӗлстви
### ҫакнашкал илемлӗ литтераттур кӗнекисем кӑларҫӗ

**Акаккӑв Л.**—„ИНКЕСЕМ“ (4 калав), сахал хут пӗлекенсене ваҫҫи . . . . . 25 п.

**Алакӗр Ваҫлейӗ**—„ВӐЙ“ 3 пайлӑ 6 карттинлӑ трамӑ . . . . . . . . . . 42 п.

**Алакӗр Ваҫлейӗ**—„ПАТТӐР ҪАПУК“ аҫапӑҫа ваҫҫи ҫырнӑ пиессӑ . . . . 22 п.

**Иссайӗв Мӗтри**—„ПРОЛЕТТАРИ ЛИТТЕРАТТУРИШӖН“, криттӗкле статйисен пуххи . . . . . . . . . . 25 п.

**Ваҫанкка (Шаланкӑ)**—„ОКТАПӖР ҪУЛӖ“ сӑвӑ-йурӑсен кӗнеки . . . . . 45 п.

**Краснов В. И. (Асли)**—„ТӐВАЛЛА“ (роман, 1-мӗш кӗнеки) . . . . . . . 65 п.

**Лашман**—„АХӐРСАМАНА“ 4 пайлӑ саттирӑллӑ комети . . . . . . . 30 п.

**Шӑпҫӑк Ҫ.**—„ФОСФОРИТ“ (оҫҫӗрксем) 24 п.

**Хумма Ҫеменӗ**—„АҪА ҪУХНЕХИ“ (повӗҫ) 30 п.

---

Ҫак асӑннӑ ҫӗнӗ кӗнекесене ҫырӑнса илме васкӑр. Кӗнекесем сахал тирашлӑ—3—4 пин екҫемпҫарлӑ кӑна. Мӗлйун халӑха вӑл сахал, ҫасах саланса пӗтме пултарать. Хӑвӑртрах илсе йулма тӑрӑшӑр.

Кӗнекесене потрепкопператсн макаҫӗнӗсемпе лавккисенҫен ыйтӑр.

Ҫӑвашсен патшалӑх истаттӗлстви.